Пенси ыйтăвĕсемпе

# Пенси виçисем ӳсрĕç

Августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен пенсийĕсем ӳсрĕç тата уйăхсерен паракан тӳлевсен виçисене çĕнĕрен шутласа пама тытăнчĕç. Пенсисен база пайĕ 15 процент, страхланă пайĕ 8 процент ӳсрĕç. Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа-тенкĕпе тивĕçтернĕ чухне июлĕн 1-мĕшĕнчи индексацие шута илеççĕ.

Пенсисен база пайне ӳстересси 2007 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче йышăннă 244-ФЗ Федераллă Саккунпа пăхса хунă. Саккунпа килĕшӳллĕн 2008 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ватлăх енĕпе паракан ĕç пенсийĕн база пайĕ 1794 тенкĕпе танлашать. Çапла вара пенси илекен пур категорисен те ĕç пенсийĕсен база пайĕсем тата патшалăх пенсийĕсен виçисем те ӳсрĕç:

– ватлăх енĕпе пенсие тухнисен, ĕçлеслĕх енĕпе 2-мĕш степень инвалидсен тата çемьере тăрантаракана çухатнипе пенси илекен хăр тăлăхсен пенсин база пайĕ 1794 тенкĕ пулать, унчченхи çумне 234 тенкĕ хушăнать;

– 80 çула çитнĕ пенсионерсен, 3-мĕш степень (1-мĕш ушкăн) инвалидсен ĕç пенсийĕн база пайне икĕ хут хăпартса палăртаççĕ, 3588 тенкĕ пулать вăл. Пенсисем вара 468 тенкĕ чухлĕ ӳсрĕç;

– ĕçлеслĕх енĕпе 1-мĕш степень (3-мĕш ушкăн) инвалидсен тата çемьери тăрантаракана çухатнипе пенси илсе тăракансен пенсисен база пайĕ 117 тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, база пайĕн (1794 тенкĕ) çуррипе – 897 тенкĕпе танлашать;

– çемьери ĕçлемен кашни çын пуçне (виçĕ çынран ытла мар) паракан ĕç пенсийĕн база пайĕ база пайĕн (1794 тенкĕ) пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ – 78 тенкĕ ӳсет.

Ватлăха, инвалидноçа, çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан ĕç пенсийĕсен страхланă пайне индексацилесси РФ Правительствин 2008 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнче йышăннă «2008 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсен страхланă пайне индексацилессин коэффициентне палăртасси çинчен» 548 № йышăнăвĕпе пулса пырать. Укçа мĕн чухлĕ хушăнасси кашни пенсионерăн тĕрлĕрен пулать. Мĕншĕн тесен пенсисен страхланă пайĕ ĕç стажĕнчен, ĕç укçи калăпăшĕнчен, ĕçпе тивĕçтерекен Пенсии фондне тӳленĕ страховани взносĕсенчен килет.

Çапла вара августра Чăваш Республикинче ватлăх енĕпе паракан ĕç пенсийĕсен уйăхри вăтам виçи 446 тенкĕ ӳсет, 4343 тенкĕпе танлашать. Социаллă пенсисен вăтамран 347 тенкĕ ӳсеççĕ, 2708 тенкĕпе танлашаççĕ.

Икĕ пенси илме тивĕç Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен пенсийĕн виçи 1241 тенкĕ ӳсет, пенсин вăтам виçи 10661 тенкĕпе танлашать.

Пенсисем тӳлесе тăрасси августра ӳснине пула уйăхсерен малашне республикипе пенсисем 141 миллион тенкĕ ытларах тӳлесе тăма тытăнаççĕ.

Муркаш районĕнче ватлăх енĕпе паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 400 тенкĕ ӳсет, уйăхне 3769 тенкĕпе танлашать. Социаллă пенсисен вăтам виçи 335 тенкĕ ӳсет, 2721 тенкĕпе танлашать. Икĕ пенси илме тивĕç Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен пенси çумне 1189 тенкĕ хутшăнать, пенсин вăтам виçи вара 9929 тенкĕпе танлашать. Районĕпе вара август уйăхĕнчен тытăнса уйăхсерен пенсисем 4 миллион тенкĕпе яхăн ытларах тӳлесе тăма тытăнаççĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенсии фончĕн районти уйрăмĕн пенсисем шутласа парасси тата тӳлесси енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**

**Пенсисен база пайĕ 2008 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен ӳсет:**

| Пенси тĕсĕ, пенсионерсен категорийĕ | Августăн 1-мĕшĕччен (тенкĕпе) | Августăн 1-мĕшĕ хыççăн (тенкĕпе) |
|---|---|---|
| **Ватлăх енĕпе паракан ĕç пенсийĕсем** | 1560 | 1794 |
| – çемьере тăранса пурăнакан пĕр çын пулсан | 2080 | 2392 |
| – çемьере тăранса пурăнакан икĕ çын пулсан | 2600 | 2990 |
| – çемьере тăранса пурăнакан виçĕ е ытларах çын пулсан | 3120 | 3588 |
| **80 çултан иртнĕ пенсионерсен пенсийĕсем; ĕçлеслĕхе çухатнипе 3-мĕш степень инвалидсем (1-мĕш ушкăн)** | 3120 | 3588 |
| – çемьере тăранса пурăнакан пĕр çын пулсан | 3640 | 4186 |
| – çемьере тăранса пурăнакан икĕ çын пулсан | 4160 | 4784 |
| – çемьере тăранса пурăнакан виçĕ е ытларах çын пулсан | 4680 | 5382 |
| **Ĕçлеслĕхе çухатнипе 2-мĕш степень инвалидсем** | 1560 | 1794 |
| – çемьере тăранса пурăнакан пĕр çын пулсан | 2080 | 2392 |
| – çемьере тăранса пурăнакан икĕ çын пулсан | 2600 | 2990 |
| – çемьере тăранса пурăнакан виçĕ е ытларах çын пулсан | 3120 | 3588 |
| **Ĕçлеслĕхе çухатнипе 1-мĕш степень инвалидсем** | 780 | 897 |
| – çемьере тăранса пурăнакан пĕр çын пулсан | 1300 | 1495 |
| – çемьере тăранса пурăнакан икĕ çын пулсан | 1820 | 2093 |
| – çемьере тăранса пурăнакан виçĕ е ытларах çын пулсан | 2340 | 2691 |
| **Çемьере тăрантаракана çухатнипе пенсисем** | | |
| – хăр тăлăхсене | 1560 | 1794 |
| – çемьен ытти членĕсене | 780 | 897 |
| **Патшалăх пенсийĕсем** | | |
| – хăр тăлăхсене | 3120 | 3588 |
| – çемьен ытти членĕсене | 1560 | 1794 |
| – инвалид-ачасене паракан социаллă пенсисем | 3120 | 3588 |

Çуралнă кун

# Ветеран 82 çулта



Августăн 1-мĕшĕнче Каршлăхри ваттисен çуртĕнче вăрçă участникĕн Илья Степановичă Лакштанкинăн çуралнă кунне паллă турăмăр. Вăл 82 çул тултарчĕ. И.С. Лакштанкин Мордва Республикинчи Старое Ардатово ялĕнче çуралнă. 1934 çулта вĕсем Улатăр хулине куçса килнĕ. 1941 çулта Канашри чукун çулсен деповĕнче ĕçлеме тытăннă.

1943 çулта Илья Степановича вăрçа илсе каяççĕ. Минск хулине 2-мĕш Белорусси фронтне лекет. Йывăр аманать. Госпитальте сипленнĕ хыççăн Илья Степановича Германие ăсатаççĕ, унтан Польшăна та çитет вăл.

1945 çулта ăна пĕрремĕш Сывлăш çарĕн истребительсен дивизине поварта ĕçлеме илеççĕ. Киле вара 1950 çулта таврăнать. Тĕрлĕ организацисенче водительте ĕçлет.

1955 çулта çемье çавăрать, анчах вĕсен пĕр ача та пулман. 1998 çулта пачах куç курми пулса ларать. Вăл халĕ 1-мĕш ушкăн инвалидĕ. 2007 çулта юратнă мăшăрĕ те çĕре кĕрет.

Халĕ вара Илья Степанович 2008 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса пирĕн патра ветерансен çуртĕнче пурăнать. Ăна кунта питĕ килĕшет. Çуралнă кун ячĕпе эпир ăна сĕтел хатĕрлесе пысăк кукăль пĕçерсе патăмăр, пĕчĕк концерт та хатĕрлерĕмĕр. Пурте ăна нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç.

**В. КРЮЧКОВА,**
**ваттисен çурчĕн культоргĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: сĕтел хушшинче ветеранпа пĕрле.**

Культура хыпарĕсем

# Купăспа каласа, юрласа савăнтарчĕ

Арсений Арсеньевич Яйцова, вăл хăй кӳршĕллĕ Çармăс Республикинчен пулсан та, пирĕн республикăра та, Муркаш районĕнче те аван пĕлеççĕ. Купăспа калама та, юрлама та ăста вăл.

Раççей Федерацийĕн, Çармăс Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ, Çармăс Республикин Иван Палантай ячĕпе хисепленекен патшалăх премийĕн лауреачĕ июлĕн 23–31-мĕшĕсенче пирĕн районта пулчĕ, предприятисемпе организацисенче пулса хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ. Мăн Сĕнтĕрти ветерансен çуртĕнче, Мăн Сĕнтĕр больницинче, çăкăр заводĕнче, Каршлăхри арçынсен мăнастирĕпе кунти ветерансен çуртĕнче, районти шалти ĕçсен пайĕнче, районти тĕп больницăра, Турайри тата Йӳçкассинчи ветерансен çурчĕсенче ăна хавас кăмăлпа кĕтсе илчĕç.



Арсений Арсеньевича чикĕлеш енче те пĕлмеççĕ мар. Хăйĕн концерт программисемпе вăл 13 çĕр-шывра пулнă. Пур çĕрте те ăна хапăл туса кĕтсе илеççĕ. Юлашки 10 çул хушшинче кăна вăл 1800 ытла ыр кăмăллăх концертне лартса панă. Халĕ те ку ĕçе малалла туса пырать.

– Укçашăн ĕçлени мар, çынсене савăнăç кӳни паха,– тет вăл.

Çавă та пĕлтерĕшлĕ самант. 2005 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче Арсений Яйцова нацисемпе халăхсен культурине аталантарас тата ăна пуянлатас енĕпе нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Президенчĕн указĕпе Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă. 2008 çулта вара ăна ĕçри çитĕнӳсемшĕн Раççей Федерацийĕн Культура министерствин кăкăр çине çакмалли паллине панă.

Арсений Арсеньевич Çармăс Республикинче «Радуга» халăх фольклор ансамблĕнче ĕçлет. Вăхăт пулсан вара вăл кирек хăçан та ташă-юрăпа савăнтарма ӳркенсе тăмасть.

**ХАМĂР ИНФ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: А.А. Яйцов юрă шăрантарать.**

2008 çул – Çемье çулталăкĕ

# Пурте пĕрле савăнчĕç, юрларĕç-ташларĕç

Çемье çулталăкне халалласа Москакасси ял тăрхĕнчи Анаткас Хачăк ялĕнче Илем кунĕнче хаваслă уяв ирттерчĕç. Уяв вара ваттисен пехилĕпе ял варринче илемлĕ вырăнта каçхи 5 сехетре тулли кĕрекерен пуçланчĕ.

Чăннипех те тулли кĕреке вара ял тăрăхĕн депутачĕ Е. Крылова, ял старости О. Данилова тăрăшнипе, ял халăхĕ пулăшнипе пулчĕ. Çулсеренех кунта пысăк хуранпа е шӳрпе, е хашлама пĕçереççĕ.

Анаткас Хачăк ялĕ ачасемпе питĕ пуян. Кунта ир пуçласа мĕн каçченех ача-пăча сасси янăраса тăрать. Уява хатĕрленнĕ çĕрте те ачасем нумай тăрăшрĕç. Кусем вĕсем: Павелпа Александр Даниловсем, Иринăпа Анастасия Крыловасем, Инесса Вершова, Анюта Смирнова. Вĕсем кĕçĕн çулхи ачасемпе концерт программи те хатĕрленĕ. Паллă ĕнтĕ, уяв «Шуçăм» халăх пултарулăх ушкăнĕсĕр иртмерĕ.

Уява Çемье çулталăкне халалланăран кунта ытларах çемьесене саламларĕç. Çак кун 20 çул каялла мăшăрланнă Галинăпа Владимир Соловьевсене, Галинăпа Петр Пушкинсене (10 çул), чи çамрăк мăшăрсене Аринăпа Анатолий Проскуровсене, çавăн пекех вĕсен чи пĕчĕк пепкине Настенькăна саламласа парнесем парчĕç. «Шуçăм» пултарулăх халăх ушкăнне те парнесем парса чыс турĕç.

Çак уявра спонсор пулса пулăшаканĕ вара Зоя Николаевна Смирнова пулчĕ.

– Ял-йыш хушăнса пырсан савăнăçĕ те нумайрах пулĕ,– терĕ юлашкинчен ял тăрăхĕн депутачĕ Елена Крылова.

Нумайччен ташласа-юрласа савăнчĕç Анаткас Хачăк ялĕн çыннисем. Уявпа вара пурте кăмăллă юлчĕç.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакассинчи культура çурчĕн директорĕ.**

Усăллă сĕнӳсем

Вăрăм тунасем ан кансĕрлеччĕр тесен кравать çумне çурмалла каснă сухан хумалла.

Çĕçĕрен пулă шăрши кĕрет пулсан ăна кĕпе-йĕм çумалли супăнпе çăвăр.

Тумтир çинче çумăр йĕр ан хăвартăр тесен ăна нӳрĕ татăк хурса якатмалла.

Чечеке ларнă ыраш таракансене пĕтерет. Ăна стена çине çакса тухмалла.

Тусанран хăтăлас тесен эрнере пĕрре те пулин пӳлĕмри тусана нӳрĕ татăкпа шăлса тасатмалла. Пӳлĕме пĕрмаях уçăлтармалла.

Кĕнекесене хупă шкапсенче упрамалла.